Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

98 (7415) № * Юн кун, 2006 çулхи ноябрĕн (чÿк) 22-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Çĕнĕ технологи – ÿсĕм çăл куçĕ



***Пурнăç аталаннă май районти пĕрлешÿллĕ хуçалăхсем те çĕнĕ харпăрлăх формисем çине куçаççĕ, ĕçсене çĕнĕлле йĕркелеççĕ, производствăна ÿстерекен çĕнĕ технологисене çул параççĕ. Халĕ каланинчен пĕри те Мăн Токшикри "Агроурожай" хупă акционерлă обществăшăн ют мар. Акă хуçалăха Е. П. Углев ертсе пыма пуçласан иртнĕ çул тĕпрен юсаса хута янă сысна ферми кăçал тупăш пама пуçларĕ. Мăн Токшиксем ку çул 30 тонна сысна какайĕ реализациленĕ пулсан та, фермăра татах 600 пуç ытла сысна пулни, вĕсене типĕлле тăрантарас технологи çинче ăнăçлă тытни хуçалăх тĕрĕс çулпа пыни пирки калать.***

***Фермăра 8 çын ĕçлет. Эсир сăн ÿкерчĕкре куракан Валентина Леонидовна Валько – вĕсенчен пĕри. Унăн ушкăнĕнчи сыснасем ыттисеннипе пĕр шайрах ÿт хушнинче – талăкра 580 грамм – çамрăк хĕрарăмăн тÿпи те пур. "Ĕçе юратса тата вăхăтра пурнăçлас пулать. Çакăнта ĕçĕн пĕтĕм вăрттăнлăхĕ",– терĕ кĕске калаçура Валентина.***

***Анатолий БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.***

### Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН НОЯБРĔН 21-МĔШĔ ТĔЛНЕ ТАЛĂКРА ВĂТАМРАН МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (КИЛОГРАМПА).**

**Цифрăсен колонкисенче: 1.Кăçал сунă. 2. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан.**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| "Оринино" | 12,0 | 1,7 |
| Чкалов яч. хис. | 10,9 | 3,1 |
| "Свобода" | 10,0 | -1,5 |
| КФХ Михайлов | 9,7 | 6,7 |
| "Волга" | 9,3 | -2,8 |
| "Восток" | 9,3 | -4,6 |
| "Ударник" | 8,9 | -0,4 |
| "Нива" | 8,9 | -2,2 |
| "Лидер" | 8,5 | -5,2 |
| "Хлебороб" | 8,4 | 2,1 |
| "Герой" | 8,3 | -2,0 |
| Суворов яч. хис. | 8,2 | – |
| Ильич яч. хис. | 8,0 | -0,8 |
| КФХ Отенов | 7,8 | 2,4 |
| Ленин яч. хис. | 6,5 | -0,7 |
| "Передовик" | 6,1 | -0,2 |
| Е.Андреев яч. хис. | 5,9 | -1,1 |
| "Сеятель" | 5,0 | -0,1 |
| "Чемеево" | 5,0 | -1,4 |
| К. Иванов яч. хис. | 3,7 | -0,3 |
| "Рассвет" | 3,3 | -2,1 |
| Чапаев яч. хис. | 1,7 | -2,4 |
| Ытти КФХсем | 11,8 | 0 |
| **Районĕпе** | **7,5** | **-0,6** |

### Уйăхлăх итогĕсене пĕтĕмлетсе

## Йывăç чылай лартрăмăр

***Çут çанталăк – пирĕн пуянлăх, эпир вара – унăн тусĕсем, тетпĕр хамăра. Çакна тĕпе хурса йывăç хунавĕсем ытларах лартса хăварма, вĕсене упрама тăрăшатпăр. Çулталăкăн вунă уйăхне ирттерсе ятăмăр та, чĕпсене кĕркунне шутлаççĕ тенĕ евĕр, пĕтĕмлетÿсем тума вăхăт. Тавралăха симĕслетес ĕçе тишкерме эпĕ район администрацийĕн çут çанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен тĕп специалистĕнчен Г.Г. СИМАКОВРАН ыйтрăм.***

**– Георгий Георгиевич, çурхи тата кĕрхи йывăç лартмалли уйăхлăхсене хыçа хăварнă май, пурнăçланă ĕçсене тишкерсе парсамăр?**

– 2006 çулхи уйăхлăхсене япăх мар вĕçлерĕмĕр тесе калас килет. Иртнĕ çул эпир 228160 тăваткал метр йывăç хунавĕсем лартрăмăр. Кăçал вара 218620 тăваткал метрпа танлашрĕ. Паллах, çаксем пурте чĕрĕлсен аван пулмалла. Пирĕн районти çынсен хисепĕ 36800, пĕр çын пуçне тивекен йывăç лартнă лаптăк 5,9 тăваткал метр.

**– Пурнăçланă ĕçсенчен хăшĕсене тĕп вырăна хуратăр?**

– Çут çанталăкпа çыхăннă пур ĕç те тĕп вырăнта шутланать. Паян палăртнă ĕçе паянах пурнăçламалла. Енчен те шыв-шур çурса каякан вырăна паян тимлĕх уйăрмарăмăр пулсан, ыран вара каю та шăтма пултарать. Шăпах ишĕлекен çырмасем, юхса выртакан шывсем хĕррипе 14,3 гектар йывăç хунавĕсем лартса хăвартăмăр. Республика тата район шайĕнчи автоçулсем хĕррипе 3,2 гектар хунавсем лартрăмăр. Тĕрлĕ харпăрлăхлă организацисемпе учреждени-сем çывăхĕнче 12,3 гектар йывăç-тĕмсемпе симĕслентертĕмĕр.

Лартнă йывăç тĕрĕс-тĕкел ÿстĕр тесен вăхăтра агротехника ĕçĕсене пурнăçламалла. Çакна эпир 22 гектар çинче туса ĕлкĕртĕмĕр. Ку ĕçе ял хуçалăх предприятийĕсенчен тата шкулсенчен 7500-ĕн хутшăнчĕç.

Газонсене 400, чечек клумбисене 4500 тăваткал метр çинче йĕркелерĕмĕр. Кивелме ĕлкĕрнĕ 19 парка реконструкцилерĕмĕр, 2 асăну лартăвне турăмăр. Вĕсенчен пĕринче Оринин ял тăрăхĕнчи Атапай шкул ачисем тăрăшнипе Г.Ф. Волков ячĕпе парк туса хăвартăмăр. Аллейăсем йĕркелесси çине те пысăк тимлĕх уйăратпăр. Çуркунне 5, халĕ Уйкас Янасал тăрăхĕнче анчах çуралнă ачасемпе ветерансен аллейине йĕркелерĕмĕр. 7 кану кĕтесĕ турăмăр. Пĕтĕмпе 64300 тĕп йывăç, 800 тĕм лартса хăвартăмăр. Юнкă ял тăрăхĕнче юман, çăка калчисен питомникне йĕркелерĕмĕр.

**– Ĕçе пĕтĕмлетнĕ май камсене уйрăммăн асăнма пултаратăр?**

– Манăн чи малтан Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне Л.Г. Ковалевана тата унти шкул директорĕн çумне В.Н. Николаевана ырăпа асăнса хăварас килет. Вĕсем тăрăшнипе Якаткасси ялĕ çывăхĕнче 7500 тĕп йывăç лартса хăварчĕç.

Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхне М.М. Пушкина тата унти шкул директорне И.А. Иванова тав сăмахĕ каламалла. Унта ĕçе вĕсем аван йĕркеленипе 1700 тĕп çăка, хурăн, чăрăш хунавĕсем лартса хăварчĕç. Çавăн пекех Муркаш шкулĕн ачисем те сахал мар тăрăшрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

### Ача амăшĕн кунĕ умĕн

## Чи хаклă çыннăмăрсене халалласа

Аннерен хакли çĕр çинче никам та çук. Кăçалхипе 9-мĕш хут ĕнтĕ эпир Ача амăшĕн кунне уявлатпăр. Кăçал вăл ноябрĕн 26-мĕшĕнче пулать.

Çак куна хатĕрленсе районта ятарлă ĕç планне тунă. Унпа килĕшÿллĕн районти тĕп библиотекăра "Анне – пурнăç илемĕ" ятпа кĕнеке куравĕ ĕçлет. Районти историпе краеведени музейĕнче тематикăлла экспозици хатĕрлеççĕ, искусство шкулĕнче вара аннесем ячĕпе литературăпа музыка каçĕ йĕркелеççĕ.

Çак эрнере ял тăрăхĕсенче ĕмĕр тăршшĕпе ырă ятне çĕре ÿкермен, ачисене тĕрĕс пурнăç çулĕ çине кăларнă амăшĕсене чыслаççĕ. Çав ятпа уяв каçĕсем йĕркелеççĕ.

Пур вĕрентÿ, культура учрежденийĕсенче те аннесене халалланă ÿкерчĕксемпе сăн ÿкерчĕксен стендчĕсене кăлараççĕ. Ача садне çÿрекенсем те çак эрнере утренниксенче амăшĕсене ăшă сăмахсемпе саламлĕç. Шкулсенче "Юратнă çыннăм ман – анне" ятпа уяв концерчĕсем, класс сехечĕсем иртĕç. Педагогика ĕçĕнчи хĕрарăм-ветерансене те уяв умĕн чыслĕç.

Ноябрĕн 25-26-мĕшĕсенче вара пур Культура çурчĕсемпе клубсенче те уяв мероприятийĕсем, концертсем иртĕç.

Мăн Сĕнтĕрти, Турайĕнчи ваттисен çурчĕсенче пурăнакансем те уяв кун тунсăхламĕç: Калайкассипе Турай шкулĕн ачисем илемлĕ юрăташăпа чуна уçĕç.

Районти тĕп больница ĕçченĕсем вара çамрăк амăшĕсемпе калаçусем ирттерĕç.

Амăшĕсене халалланă район шайĕнчи уяв ыран район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче иртет. Кашни ял тăрăхĕнчен нумай ачаллă сумлă амăшĕсене чĕнеççĕ унта. Вĕсен шутĕнче ĕçре малта пыракан, обществăлла ĕçре хастар амăшĕсем, ют ачасене тăван амăш ăшшине парнелекенсем, творчествăра çитĕнÿ тăвакансем.

Уявра тин çеç ача амăшĕ пулнисене хăйсен пепкисемпе пĕрле чыслаççĕ. 6 çамрăк мăшăршăн асра юлĕ çак кун. Вĕсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, районти социаллă аталану пайĕн ертÿçи, районти хĕрарăмсен канашĕн председателĕ А.Е. Андреева саламлать. "Солнышко" ача сачĕн воспитанникĕсемпе "Расна" эстрадăпа фольклор ушкăнĕн концерчĕ уява илем кÿрĕ. Вăл вара районти историпе краеведени музейĕнчен пуçланать. Малтанах "Тĕрĕ çутинчи тăван кĕвĕсем" ятлă сурпан куравне хутшăнĕç, Ярапайкассинчи "Екрем" халăх фольклор ушкăнĕ саламлĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

### Çивĕч ыйту

## Эрех – инкек-синкек пуçламăшĕ

Эрехпе иртĕхни ырă патне илсе кайманнине пурте лайăх чухлатпăр. Ытларах чухне вара инкек-синкек çăл куçĕ те çут шĕвеклĕ черккере пулса тăрать. Тĕрлĕ спирт шĕвекĕпе наркăмăшланнă, килте хатĕрленĕ эрех суррогачĕсене ĕçсе сиплев çурчĕсене çакланнисем пирки тăтăшах илтетпĕр тата куратпăр. Эрехпе иртĕхесси çул çитмен çамрăксем тата хĕрарăмсем хушшинче ÿссе пыни те питĕ шутлаттарать. Çапах та сарăхнă ÿтлĕ, тĕсне улăштарнă куççемлĕ çынсенчен чылайăшĕ хăйсем йăнăш утăм тунине йышăнасшăн мар.

Ĕçкĕпе иртĕхекенсемпе, тĕрлĕ суррогатсем сутакансемпе кĕрешсе, сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси пирĕн ĕçре яланах тĕп вырăн йышăннă.

Районта вунă уйăх хушшинче эрех ĕçсе йĕркене пăснă 1770 çынна тытса чарнă, 20.20, 20.21, 20.22 статьясемпе айăпланă. Хăшĕсен вара пĕрре мар ответ тытма тивнĕ, 75-шĕ административлă айăплавра пулнă. 3850 çынна шалти ĕçсен пайĕнче 897750 тенкĕлĕх штрафланă. Шыраса илнĕ укçан виçи 635075 тенкĕпе танлашнă.

Милици ĕçченĕсем район прокуратурипе районти суту-илÿ предприятийĕсем алкоголь тата спирт хутăшлĕ ытти продукцисене çул çитмен çамрăксене сутасси епле пулса пынине тăтăшах тĕрĕслеççĕ. Çапла вара тĕрĕслев вăхăтĕнче Раççей Федерацийĕн КОАПĕн 14.15 статйине тата 14.16 статьян 4-мĕш пайне пăсни палăрчĕ. 7 тĕслĕх тупса палăртнă: вĕсенчен 4-шĕн пирус изделийĕсем, 3-шĕн сăра сутнăран административлă йĕркепе ответ тытма тивнĕ. Пĕтĕмĕшле 719 тĕрĕслев ирттернĕ хыççăн 16-мĕш статьяна пăснă 86 тĕслĕх тупса палăртнă. 8,950 литр этил спирчĕ, 0,5 литр денатурат, 8,175 литр сăмакун тата 10,75 литр спирт пур шĕвеке туртса илнĕ.

Чăваш Республикин 2003 çулта кăларнă "Чăваш Республикинче административлă майпа правăна пăсни çинчен" саккуна тĕпе хурса чылай профилактика ĕçĕсем туса ирттернĕ. Ку тĕлĕшпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, старостăсемпе районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем тăтăшах тĕрĕслевсемпе яла тухаççĕ.

Саккуна пăсса эрех хатĕрлекенсене тата сутакансене тупса палăртассипе, çапла майпа административлă явап тыттарассипе çирĕп йышăнусем пурнăçланă. Паянхи куна Чăваш Республикин саккунĕн 16-мĕш статйисене пăсакансене шалти ĕçсен пайĕнче 140 çынна шута илнĕ. Çакна асăрхаттарсах калас килет. Спирт пур шĕвеке саккуна пăсса сутакансене уголовнăй йĕркепе те айăплаççĕ. Паянхи куна кун пек 2 ĕç пуçарнă ĕнтĕ. Следстви вĕçленсен, айăплисене суд тенкелĕ çине лартсан, ку тĕслĕхсемпе тĕплĕнрех паллаштарăпăр.

Алкоголь сывлăхшăн сиенлĕ пулни пурне те паллă. Анчах çак шухăшпа килĕшмен çын питĕ нумай. Эрех-сăрана пĕлсе, "культурăллă", "сывлăхшăн" тесе ĕçсен вăл сиен кÿмест тесе шутлаççĕ хăшĕ-пĕрисем. Чăннипе вара алкоголĕн пĕчĕк дозин сиенĕ пĕчĕкрех, нумай ĕçсен сиенĕ те нумайрах. Ĕçкĕ йĕркисем майĕпен хăнăхусем патне илсе çитереççĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ, авторитечĕ культ шайне çитет. Алкоголь кульчĕ вара ĕçкĕçсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çапах та пурнăç чăнлăхĕ çапла, ĕçекенĕ пуçа çухатса ĕçет, сутаканĕ укçине хулăнлатас, çын куççулĕпе пуяс тесе сутать.

Алкоголь – наркотик. Ытти наркотик пекех вăл çын кăмăлне улăштарать, эйфориллĕ туйăм парнелет. Шăпах эйфори улталать те çынна, çавна пулах эрех-сăра сывлăхшăн усăллă пек туйăнать иккен ĕçекене. Алкоголь çынсене куç кĕрет пĕтерет пулсан та, ăна чылайăшĕ "сывлăхшăн" тесе ĕçме тăрăшать. Эрех сутса услам тăвакансем вара намăса çухатсах пускил çемйисене куççуль, харкашу парнелеççĕ. Вĕсемшĕн укçа пахарах вĕт. Вутă хутса ăшăтман, сив пÿртре ларакан ача выçăран йĕни те усламçăшăн нимĕн те мар. Çапах та çын куççулĕпе укçа тăвакансене ятран асăнни, тен, кăштах та пулин пичĕсене хĕретĕ, ырă ĕç туни мар вĕт.

Халĕ август-октябрь уйăхĕсенчи тĕслĕхсемпе паллаштарас терĕмĕр.

Мăн Шашкар ялĕнчи 1979 çулта çуралнă Ирина Николаевна Ермаковăна ку енĕпе административлă йĕркепе явап тыттарнă. Сăмакун сутнăшăн Шомик ялĕнчи 1989 çулта çуралнă Екатерина Станиславовна Романовăна асăрхаттарнă. Мăн Шашкар ялĕнчи Дружная урамри 44-мĕш çуртри Мария Осиповна Степанова 1937 çулта çуралнă, спирт сутса укçа тума именмест иккен. Шăпах çакăн пек усламшăн 6 хут асăрхаттарни вара уншăн нимĕн çинчен те каламасть тейĕн.

Вăрманкас ялĕнчи 1955 çулта çуралнă Вячеслав Михайлович Макарова та спирт шĕвекĕ сутнăшăн явап тыттарма тивнĕ. Çавăн пекех Турайри 1949 çулта çуралнă Роза Порфирьевна Николаевăна, Автанкассинчи 1968 çулта çуралнă Леонид Аркадьевич Матвеева спирт сутнăшăн явап тыттарнă.

Ятман ялĕнчи 1929 çулта çуралнă Антонина Александровна Ятмановăна тата Вăрманкасри 1938 çулта çуралнă Христиния Аристарховна Скворцовăна спирт пур шĕвекпе услам тунăшăн явап тыттарма тивнĕ. Купăрляри 1958 çулта çуралнă Елена Георгиевна Фроловăна спирт сутнăшăн явап тыттарнă.

Вĕрентÿ учрежденийĕсенче эрех-сăра, пирус изделийĕсен сиенĕ пирки усă калаçусем ирттеретпĕр. Çавăн пекех тĕрлĕ методика пособийĕсемпе паллаштаратпăр. Çапла майпа çул çитмен çамрăксем пĕлччĕр, ăнланччăр эрех инкек-синкек çăл куçĕ пулнине.

**В. ГРИГОРЬЕВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн ертÿçин çумĕ.**

### Юбилей

## *Саламлатпăр*



Хамăрăн юратнăран та юратнă мăшăра, пархатарлă аттепе хуньстарике, ăшă кăмăллă асаттене, ырă кăмăллă кĕрĕве, тараватлă йыснана, хаклă хăтана тата пулăшуран нихăçан та аякра тăман тăванăмăра – Муркашра пурăнакан тата çамрăкранпах ĕç ĕмĕрне районти тĕп больницăпа çыхăнтарнă **Николай Филиппович КУЛИКОВА,** çынна йывăр вăхăтра яланах ăнланса пулăшнишĕн, ылтăн алăллăскер нихăçан та нимĕнле ĕçрен те хăраса тăманнишĕн тата тăвансемпе, ял йышпа, ĕçтешсемпе пĕрмаях хисеплĕ те уçă кăмăллă пулнишĕн 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, ĕмĕрĕнче ку таранччен туса ирттернĕ ырă ĕçĕсемшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Хисеплĕскерĕмĕр, хăв суйласа илнĕ çулунтан эсĕ малашне те уйрăлмасса шанатпăр. Çавăнпа та ĕмĕтленнĕ ĕмĕтÿсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, тĕллевÿсем пурнăçланччăр. Çулсем иртнине пăхмасăрах çакна валли санăн пурнăç энергийĕ çителĕклине курса тăратпăр. Сывлăхпа телей, ăнăçу, çывăх тăванусен юратăвĕ, мăнукусен хаваслă кулли санăн пурнăç çулне вăй парсах тăччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, 4 мăнукĕ, хăтипе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

---



Чÿк уйăхĕн 24-мĕшĕнче Ситуккасси ялĕнче пурăнакан **Вевея Кузьминичнапа Петр Архипович ЕГОРОВСЕМ** пĕрлешнĕренпе 50 çул çитет.

Эпир юратнă аттепе аннене, кукамипе кукаçине, асаттепе асаннене çак ылтăн туйпа ăшшăн саламласа вĕсене çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, пурнăç сукмакĕпе чăрмавсăр çирĕппĕн утма вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

Иртет çав вăхăт, çитрĕ ылтăн туй,
Уяв ячĕпе сире сунатпăр
Хĕвеллĕ пурнăç, ырлăх та телей
Тата хĕрÿллĕн, ăшшăн саламлатпăр.

**Салампа: 3 хĕрĕ, 4 ывăлĕпе 3 кинĕ, 11 мăнукĕ, тăхлачисем, тăванĕсем.**

### Çырăнтару-2007

## Çитес çул илсе тăма

***Районти «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.***

***Ертÿçĕсене район хаçатне ĕç коллективĕсенче вăй хуракансене ведомоçпе çырăнса парассине йĕркелеме ыйтатпăр. Район хаçачĕн редакцийĕ.***